Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

68 (7708) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи августăн (çурла) 26-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Пĕтĕмĕшле врач практикин офисĕнче

## Ял çыннисен сывлăхĕшĕн



*«Муркашри тĕп больница» муниципаллă сывату учрежденийĕн ӳсĕмĕсем – районти сывлăх хуралĕнче вăй хуракансен пĕрлехи ĕçĕ, тăрăшулăхĕ.*

*Эсир паянхи сăн ӳкерчĕкре куракан сывлăх хуралçисем Москакассинчи пĕтĕмĕшле врач практикин офисĕнче пĕрремĕш кун мар ответлăха туйса вăй хураççĕ. Тӳрех каламалла, хăйсен тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлаççĕ вĕсем.*

*– Ĕçлессе ĕçлетпĕр-ха та, анчах ял çыннисен сывлăхĕшĕн пурнăçламалли те сахал мар. Çынсем хăйсем эрех-пируспа айкашни пирĕн пĕтĕмĕшле ĕçе йывăрлатать, çынсен пурнăçĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратать. Кайран вара хăйсемшĕнех чавса çыван та çыртма çук. Çавăнпа та чирсенчен епле асăрханассине ăнлантарассине тата ял çыннисене профилактика мелĕсемпе паллаштарассине хамăр ĕçре мала хуратпăр, – терĕç кĕске калаçура Галина Ивановна Николаева врачпа Галина Зосимовна Владимирова медсестра (сулахайран сылтăмалла).*

*Галина Ивановна сывлăх хуралĕнче 16 çул пулсан, Галина Зосимовнан ĕç стажĕ – 35 çул. Çак тапхăрта сывлăх хуралçисем миçе çынна вăхăтра пулăшу парса вĕсен пурнăçне çăлса хăварман-ши, миçе çемьерен инкеке сирсе яман-ши? Çак хурава ял çыннисем çеç пĕлеççĕ. Пĕлеççĕ те йывăр вăхăтра шăпах çак ĕçченсем патне пулăшу ыйтса пыраççĕ.*

**Анатолий БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Паянхи кун ыйтăвĕсемпе

## Кĕр аки çĕнĕлĕх ыйтать

***Хаçатăн иртнĕ номерĕнче кĕр аки ыйтăвĕсемпе пуçарнă калаçăва паян малалла тăсатпăр. Хаçат хăни – район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп агрономĕ А. ПАВЛОВ. Кĕр аки çитнĕ май хумхантаракан тепĕр ыйту вăл – тырă акас çĕрте çĕнĕ культурăсемпе усă курасси. Тритикале – ырашпа тулă гибричĕ. Ун çинчен паянхи сăмах.***

Çĕр ĕçченне тритикале пирки ытларах пĕлни пăсмасть. Çакна ăнланса илнисем пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ асăннă культурăна ăнăçлă акса туса илеççĕ. Ырашпа тулă гибричĕ – продуктивлăхăн пысăк потенциаллĕ, кăмпа тата ерекен чирсене хирĕç тăма пултаракан, çĕр пулăхлăхне тиркемен, белоксен пысăк виçиллĕ культура. Ку тырăпа комбикорм, çĕпре тума, çăкăр пĕçерме, кондитер производствинче анлăн усă курма пулать. Апат пахалăхĕпе ытти культурăсенчен самай иртternипе вăл Европăри ял хуçалăхĕнче тахçанах тĕп вырăнта. М. Бернард кăтартăвĕсемпе тритикале гектартан 1,0-1,1 тонна белок парайрать. Аминокислотасен тулли тытăмĕллĕ болоксемпе пуян пулни тритикалепе апат-çимĕçре те, выльăх-чĕрлĕх патĕнче те туллин усă курма май парать. Тритикалерен пĕçернĕ çăкăрăн биологилле пахалăхĕ тулăпа ытти культурăсенчен те иртterет. Улшăну энергийĕпе тритикале тулăпа ырашран вăтамран 14-23 процент иртterет. Ăна выльăхсен рационне кĕртни сахал апатпах вăтам ӳт хушаслăха ӳстерет, апат тăкакне пĕчĕклетет. Третикалирен хатĕрленĕ выльăх апатне урпаран тата кукурузăран тунă апат рационĕнче 40-45 процента çитерсен те выльăхсен ӳт хушаслăхĕ 4-20 процент ӳсет.

**(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).**

## Фермăсене хĕле хатĕрлеççĕ

***Çанталăк ирĕн-каçăн сулхăнлатрĕ. Умра – кĕр кунĕсем. Унтан вара сивĕ хĕлччен те вăхăт нумаях юлмасть. Мĕнле хатĕрленеççĕ районти фермăсенче выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçармалли тапхăра? Çак ыйту тавра калаçрăмăр та ĕнтĕ эпир район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп специалист-экспертчĕпе (тĕп зоотехникĕпе) Т.А. АЛЕКСЕЕВАПА.***

**– Татьяна Александровна, выльăхсен продуктивлăхĕ вĕсене епле тăрантарнинчен нумай килет. Выльăх апатне хатĕрлени çинче чарăнар-ха малтан.**

– Обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма районĕпе утă çителĕклех – 7102 тонна хатĕрленĕ. Ку вăл палăртнин 125 процентне пулать. Унсăр пуçне хресчен (фермер) хуçалăхĕсем 755 тонна хатĕрленĕ ăна.

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче кăçалхипе 3-мĕш çул ĕнтĕ сенажпа силоса хими препарачĕсемпе – кальци пропионачĕпе, пропион кислотипе хатĕрлеççĕ. Консервантпа кăçал 12400 тонна, закваскăпа 8300 тонна тунă.

Сенажа вара пурĕ 4192 тонна янтăланă (51 процент). Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра çитес вăхăтра ăна каю курăкĕнчен хатĕрлеме палăртаççĕ. Ытти хуçалăхсенче вара силос тăваççĕ. Районĕпе ку апат хальлĕхе палăртнин 88 процентне – 17467 тонна пур ĕнтĕ. Паянхи кун «Свободăра» ăна нумай çул ӳсекен курăксенчен, «Ударникра» кукурузăран, Ленин яч. хис. хуçалăхра судан курăкĕнчен хатĕрлеççĕ.

Выльăх апатне хатĕрленĕ çĕрте уйрăмах «Восток», «Герой», «Передовик», Суворов ячĕпе, Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсем лайăх ĕçленине палăртмалла. Ленин яч. хис. хуçалăх пирки çакна калама çук. Вăл «симĕс ĕç çине» кая юлса тухрĕ. «Хлебороб» хуçалăхра вара утă кăна хатĕрленĕ. «ВТМ» хуçалăхра сыснасем валли, Муркашри чăх-чĕп фабрикинче чăхсем валли витаминлă курăк çăнăхне хатĕрленĕ.

**– Пахалăхĕ енчен мĕнле? Ĕçлени харама каймарĕ-и?**

– Районĕпе хатĕрленĕ утăн 47 процентне 1-мĕш класли. Ку лайăх кăтарту. Кун пекки нихăш çул та пулман. Чкалов яч. хис. хуçалăхăн пĕтĕм утти, Суворов яч. хис. хуçалăхра 86 процентне 1 класлă. Çавăн пекех «Ударник», Е. Андреев ячĕпе, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче те ку кăтарту районти вăтам кăтартуран пысăкрах: 75–63 процент.

Районта хатĕрленĕ утăн тепĕр 36 процентне – 2-мĕш, 17 процентне – 3-мĕш класли. Анчах та «Лидер» хуçалăхра утă пĕтĕмпех 3-мĕш класли. «Свободăра» та вăл 53 процентпа танлашать. Силоса илес пулсан, 72 процентне 2-мĕш, ытти – 3-мĕш класлă.

**– Ĕнен сĕчĕ чĕлхи çинче, теççĕ те, паян районта сăвăм мĕнле?**

– Районĕпе кашни ĕнерен вăтамран талăкне 12 килограмм сĕт сăваççĕ. «Геройра» вăл 14, Суворов яч. хис., «Оринино», «Передовик» хуçалăхсенче 13 килограмран та иртет. Çавăн пекех «Ударник», Ильич яч. хис. хуçалăхсенче те вăл районти вăтам кăтартуран пысăк.

**– Çак вăхăтра витесене юсассипе те ĕçсем сахал мар. Ку енĕпе лару-тăрăва мĕнле хак паратăр?**

– Е. Андреев яч. хис., Ленин яч. хис., «Хлебороб» хуçалăхсемсĕр пуçне ыттисенче пур çĕрте те кулленхи юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Суворов яч. хис. хуçалăхра вара хăйсен строительство бригадиех витесене тĕплĕн юсать. Çавăн пекех «Оринино», «Герой» хуçалăхсенче фермăсене тĕплĕн юсассипе лайăх ĕçленине палăртмалла.

**– Дезинфекци тăвассипе, шуратассипе лару-тăру епле?**

– Ку ĕç графикпа килĕшӳллĕн пулса пырать. Районти выльăх-чĕрлĕх чирĕпе кĕрешекен станцин дезотрячĕ пурнăçлать ăна. Майракаллă шултра выльăхсен витисенче ку ĕçе пур çĕрте те туса ирттернĕ. Сысна фермисенчен хальлĕхе «Восток», «Агроурожай», Ильич яч. хис., «Оринино», «Сеятель» хуçалăхсенче туса ĕлкĕреймен-ха.

Витесене шуратас енĕпе вара ĕçе хăвăртлатмалла. Майракаллă шултра выльăхсен фермисенче ăна «Герой», «Свобода» тата Ильич яч. хис. хуçалăхсенче çеç пурнăçланă-ха. Сысна витине вара «Геройра» çеç шуратнă. Ку ĕçе Андрей Альбертович Максимов фермер бригади тăвать. Çитес вăхăтрах вăл çак тĕллевпе «Оринино», Суворов яч. хис. тата «Ударник» хуçалăхсене çитет.

Палăртмалла, ăратлăх енĕпе ĕçлекен хуçалăхсен ку ĕçе çулталăкра икĕ хутчен ирттермелле. Йăлтах укçатенкĕпе çыхăннăран хальлĕхе пĕр хут шуратнипех çырлахма тивет.

Шурчари сурăх фермине те дезинфекци тунă. Дезинфекци тăвас, шуратас ĕçе Муркашри чăх-чĕп фабрикинче йăлтах пурнăçланă.

**– Тавах, Татьяна Александровна, калаçушăн.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

Республикăра

## Ĕç укçине вăхăтра тӳлемелле

«Республика влаçĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене туллин тата вăхăтра пурнăçлаççĕ. Çав вăхăрах промышленноçпа строительство комплексĕн 29 предприятийĕн хăйсен 20 пине яхăн ĕçченĕ умĕнче парăмсем пур. Çак лару-тăрăва нимĕнле сăлтавсем те тӳрре кăларма пултараймаççĕ», - тенĕ ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров тунти кун ирттернĕ Правительство ларăвĕнче. Республика пуçлăхĕ Правительствăна право хуралĕн органĕсемпе пĕрле çавнашкал предприятисен ăнăççăр ертӳçисемпе хуçисем тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăнма, авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне ĕç укçипе çыхăннă парăмсен виçине палăрмаллах чакарма хушнă.

Экономика аталанăвĕпе суту-илӳ министрĕ Иван Моторин асăннă ыйтăва татса парас енĕпе пурнăçлакан ĕçсем çинчен пĕлтернĕ. Тĕслĕхрен, предприятисен ертӳçисемпе пĕрле графиксем хатĕрлеççĕ, вĕсенче ĕçлекенсен умĕнчи шалу парăмĕсене татмалли вăхăта пайăррăн палăртаççĕ. Министр чылай çĕрте хуçалăх субъекчĕсен парăмĕ вăхăтлăх пулни, укçана пĕр уйăхран кая юлмасăр тӳлени çинчен каланă.

«Вырма – 2009» конкурс

## Малтисене чыслатпăр

Районта вырмана хутшăнакан комбайнерсен «Вырма-2009» конкурсĕн черетлĕ тапхăрне пĕтĕмлетнĕ. Унпа килĕшӳллĕн августăн 17 – 23-мĕшĕсенче **«АКРОС-530», «ДОН-1500» класлă** комбайнсем хушшинчи ăмăртура «Герой» хуçалăхри Валерий Васильевич ЕРДУКОВ экипажĕ çĕнтернĕ тесе йышăннă. Вĕсем «Дон-1500» комбайнпа 288 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ. Иккĕмĕш вырăнта Суворов яч. хис. хуçалăхри Радонеж Виссарионович КУЗНЕЦОВ экипажĕ (265 тонна). Виççĕмĕшĕ – Суворов яч. хис. хуçалăхри Иван Александрович НИКОЛАЕВ экипажĕ (153 тонна).

**«Вектор», «Енисей-954», «Полесье» класлă** «хир карапĕсем» хушшинчи ăмăртура пĕрремĕш вырăнта Чкалов яч. хис. хуçалăхри Болеслав Николаевич НИКИТИН экипажĕ (269 тонна). Иккĕмĕш вырăнта 91 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ кăтартупа «Ударник» хуçалăхри Владимир Алексеевич СТЕПАНОВ экипажĕ. Виççĕмĕш вырăнта «Ударник» хуçалăхри Юрий Александрович ВАСИЛЬЕВ экипажĕ (88 тонна).

**«Енисей-1200» класлă** комбайнсемпе ĕçлесе пĕрремĕш вырăна Ильич яч. хис. хуçалăхри Юрий Петрович ЕГОРОВ экипажĕ тухнă (122 тонна). Иккĕмĕш вырăнта Ильич яч. хис. хуçалăхри Владислав Иосифович АВРАМОВ экипажĕ (106 тонна). Виççĕмĕш вырăнта Е. Андреев яч. хис. хуçалăхри Димитрий Вячеславович НИКИФОРОВ экипажĕ (90 тонна).

**«Нива-СК-5» комбайнсемпе** ĕçленĕ çĕрте малти вырăна «Горбунов» хресчен (фермер) хуçалăхĕнчи Владимир Валериевич НЕСТЕРОВ экипажĕ тухнă (155 тонна). Иккĕмĕш вырăнта «Герой» хуçалăхри Лин Витальевич ИВАНОВ экипажĕ (134 тонна). Виççĕмĕш вырăна 95 тонна çĕнĕ тырă çапса тĕшĕлесе «Герой» хуçалăхри Геннадий Семенович ПИСКАРЕВ экипажĕ тухнă.

Çĕнтерӳçĕсене «Вырма-2009» эмблема тата 300 тенкĕ укçа свидетельстви, призлă вырăнтисене 200 (2-мĕш вырăн) тата 100 тенкĕ (3-мĕш вырăн) укçа свидетельствисене панă.

**Хамăр инф.**

Ыйту – хурав

## 2010 çулхи халăх çыравĕ

**– Çитес çул халăх çыравне ирттернĕ май çынсем пирки сведенисем камсем пухни тата вĕсене ĕçшĕн тӳлес йĕрке пирки пĕлес килет.**

– Çынсем пирки сведенисем пухас ĕçе Раççей Федерацийĕн гражданĕсене явăçтараççĕ. Унччен вĕсене ятарлă майпа вĕрентеççĕ. Çак ĕçпе çыхăннă çынсене вĕрентес тата ĕçшĕн тӳлес йĕркесене Раççей Федерацийĕн Правительстви палăртать.

**– Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕн итогĕсене мĕнле майпа пĕтĕмлетеççĕ-ши?**

– Халăх çыравĕн итогĕсене пĕтĕмлетессин йĕркине тата унăн вăхăтне Раççей Федерацийĕн Правительстви палăртать. Ку даннăйсем вăрттăнлăх пулса тăмаççĕ, вĕсемпе кашниех паллашма пултарать. Çырав итогĕсене официаллă майпа пичетлесе кăларма тивĕç.

**З. ВИНОГРАДОВА, Чăвашстатăн предприятисен статистикин Муркаш районĕнчи пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ.**

ÇЫРĂНТАРУ

**Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма унччен хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**